Çерхей Шалăвин



# Хисеплĕ кĕçтенкки

Чăваш Кĕнеки Улăмĕ
Шупашкар 1931 ç

ÇЕРКЕЙ ЙАЛАВИН

# ХИСЕПЛӖ КӖÇТЕНККИ

(К А Л А В)

ЂӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар — 1 9 3 1

Отпечатано в тип. № 1
ЧУВАШГИЗА
Уп. Чувашглавл. № 1275
Заказ № 65
Тираж 5.000 экз
2 п. л.

Хирте ыраш вырса пĕтернĕ, çуртырри вырма пуçламанха. Çанталăк уçă та типĕ тăрат. Хăшпĕр ђухне таçта инçетре çумăр пĕлĕђĕсем татăкан-татăкан курăнкалаççĕ те, кайран вĕсем те саланса пĕтеççĕ. Сĕлĕ ĕлкĕрнĕ, тухса вырсан та йурамалла, анђах никам та хире тухма хăйаймаст, пурте хăранипе пӳртре лараççĕ.

— Йала шуррисем килнĕ, — тесе пĕр-пĕринпе пăшăлтатаççĕ хресђенсем: — ниçта кăлармаççĕ. Тухсан та пит хăрушă.

Вăхăтран вăхăта пăшал сасси илтĕнет. Хăш ђухне тата тупă сасси те кĕмсĕртетсе пĕтĕм йала ђĕтретет.

Урамра йал çыннисене курайман, çемйи-çемйипе пӳртре пухăнса ларнă та кантăкран пăхма та хăраççĕ.

Сас-ђĕвĕсĕр, шăппăн урам тăрăх, пĕр пек тумланнă, пăшаллă тискер çынсем çӳреççĕ.

— Ђехсем килнĕ, комуниссене пĕтереççĕ,—пăшăлтатаççĕ йал çыннисем.

Кеçтенкки ашшĕ комунис, анђах халĕ йалта çук вăл.

— Хĕрлĕ квартийе кайнă,—тет амăшĕ, Кĕçтенкки унтан „атте ăçта кайнă?" тесе ыйтсан.

Кĕçтенкки пит çамрăкха, нимĕн те пĕлмест.

— Анне урамма кайами?—йăлăнат̆ вăл амăшне иртенпех.—Тухами, анне, çулла мĕн пӳртре лармалли? Лăривансам патне çеç кайса килетĕп!

Амăшĕ пуçне уснă та, тĕпелти сак çинђе темĕскер шухăшласа ларат̆. Ларсан-ларсан ђӳређе умне пырса, урамра пăшалпа çӳрекен салтаксене вăрттăн, шывлă куçĕпе пăхса, пĕркеленнĕ аллипе йунат̆.

— У-у-у! тискер кайăксем! Улпут тарçисем, хресђен йунне ĕçме килетĕри? Нумайах çӳреймĕр кунта Пирĕн те праçнĕк çитĕ!

Кĕçтенккин урама тухса лашалла выљђасси килет пӳртре ђăтма çук пăђă. Пĕрре çех шыва кайса кĕресђĕ.

— Анне, шыва кĕме кайами? — туртат̆ ăна михĕ пек хытă, хуралнă кĕпи аркинђен.

Амăшĕ шывланнă куçĕсемпе ун çине йăвашшăн пăхрĕ те ăна хăй ђĕрçи çине çĕклесе лартрĕ.

— Ех, ађам, ађам, нимĕн те пĕлместĕн вĕтха есĕ, çамрăк, ытла çамрăк. Тухма йурамаст̆ урама, сана пуринђен те ытла тухма йурамаст̆.

— Мĕншĕн тухмалла мар вара, анне?—выљђаса тăракан çаврака, илемлĕ куçĕсемпе тилмĕрсе пăхат̆ амăшне Кĕçтенкки. — Халĕ те ĕнертенпе ниçта та тухман...

— Авă куратни, çӳреççĕ, — тăсса кăтартрĕ вăл урамалла. — Усалскерсем, ђухăнсен йунне ĕçме килнĕ вĕсем. Комуниссене пит кураймаççĕ. Сан аçу комунис. Тухсанах, комунис ывăлĕ тесе çапса пăрахĕç. Вĕсен ђĕре çук вĕт. Хам та вăн пӳртре хăраса ларагăп. Есĕ мана кашни кун „атте ăçта кайнă“

тесе аптăрататăн. „Хĕрлĕ квартийе“ кайнă вăл, шуррисене, ђехсене хирĕç. Авă урамра куçĕсене çавăркаласа утса çӳреççĕ вĕтха, çавсене хирĕç вăрçма кайнă, ађам!

Амăшĕн хуйхăпа пĕркеленнĕ пиђĕ тăрăх куççуљ шăпăртатса анса Кĕçтенккин шурă, кăтра пуçне йĕпетрĕ.

— Ех! ађам, ађам, шуррисем çĕнтерсен йепле пурнăпăр, пурнăç памаççĕ вĕсем пире. Аçусем те инçе мар теççĕ. Патăрйелĕнђе тăраççĕ тени илтĕнет те, нийепле кайма çук. Йалтан салтаксем никама та ниçта кăлармаççĕ... Хăçан килĕç... Хăçан кăна килĕç!

Кĕçтенкки тĕлĕкри пек çакна астăвать: пĕрре урамра кунĕпе выљаса ывăнсан каçпа киле таврăнђĕ. Хырăмĕ выçнă унăн кунĕпе ђупса çӳресе.

Пӳртре: ашшĕ, Хĕритун куккăшĕ тата амăшĕ пăшăлтатса темĕскер калаçса лараççĕ.

— Анне, кăваспа çăкăр парха мана?— пырса тăђĕ вĕсен умне Кĕçтенкки.

Никам та, нимĕн те каламарĕ ăна хирĕç, виççĕшĕ те аллисене сулкаласа пăшăлтатса калаçаççĕ.

— Хусана илнех теççĕ, кунталла çывхараççĕ теççĕ. Пирĕн иксĕмĕрĕн хĕрлĕ квартийе çырăнас пулать,— пăшăлтатать Кĕçтенкки ашшĕ.—Пĕрлешес пулать. Пурин те пĕрле пухăнас пулать. Капла пире кунта йалта, пĕрерĕн пĕрерĕнех çакса вĕлерĕç.

Кĕçтенкки пăхса тăђĕ-тăђĕ те, çилли килнипе тарăхса кăшкăрса пăрахрĕ амăшне:

— Çийес килет тенĕ сана! Миçе каламалла!

Амăшĕ Кĕçтенкки çине çиленсе пăхса илҫĕ.

— Ан çухăр, кăтра путек! Аннŭне çапла кăшкăраççĕ-и? Кам вĕрентрĕ сана капла йанрама?— нихçан çиленменнипе йатласа пăрахрĕ вăл.—Ме, ларса çи!

Пуçне ҫиксе ларакан салхуллă ашшĕ те ун çине пăхса илҫĕ, анҫах унăн куçĕсем çиленсе пăхмаççĕ.

— Ĕретлĕ калаçкала, есĕ те! —хăтăрҫĕ амăшне Кĕçтенкки хутне кĕрсе ашшĕ.—Аҫа мĕн пĕлет вăл?

— Ŭлĕмрен ăса кĕрĕ, амăшпе апла калаçма пăрахĕ!—тавăрса kaларĕ амăшĕ.

Кĕçтенкки кăтра пуçне уснă та сĕтел хушшинҫе пŭрнипе çăварне ҫиксе, нăшăклатса ларăт.

— Ну, çи! мĕн çиместĕн, тасамар пŭрнене çăварна ан хып! Кус кай, аллуна çу!—йаглаçăт амăшĕ.

— Ҫарăнха есĕ, пăрах унпа харкашма,—ҫарăт áна упăшки:—мана çула кайма хатĕрле!

— Пайанах кайас тетри?

— Пайан çĕрле каймалла пулăт. Тŭрех Пăвана кайас, унта тепĕр патталйон пухмалла, терĕç. Çапла-и, Хĕритун?

— Çапла тумалла пулăт,—тет Хĕритун Ваçук çине пăхса:—тырра та пуçтарса хăвараймарăмăр.

— Мĕн тăвас тетĕн, Хĕритун пиҫҫе, пиртен килмест вăл йапала. Пире канăçлă ĕçлеме парасшăн мар!

Тарук (Кĕçтенкки амăшĕ) пĕрре аҫи çине пăхăт, пĕрре упăшки çине пăхса илет. Иккĕшне те шел, пĕри вăрçнипе нăшăклатса йĕрсе ларăт, тепри вĕсене йала хăварса, хăй те пĕлмен çĕре, хăруш çĕре, пăшал тытса вăрçма кайăт.

— Ну, кил кунта, кил. ҫарӑн, ҫиллӗм килнӗ йенне ҫеҫ кӑшкӑрса пӑрахрӑм сана, ан йӗр,—пуҫӗнҫен саврӗ ӑна амӑшӗ. Кӗҫтенкки йӗме ҫаранса кӑвас ҫине ҫӑкӑр турама пуҫларӗ.

Пӗртен-пӗр ывӑл вӗсен, аҫаш ӳсет Кӗҫтенкки. Амӑшӗ те, ашшӗ те ҫав тери йуратаҫҫӗ ӑна.

Ваҫук аҫипе арӑмӗ ҫине тилмӗрсе пӑхса илҫӗ.

— Есӗ кайсан епӗр кунта йепле пурнӑпӑр?— унӑн шухӑшне пӗлнӗ пекех каларӗ, ҫӗтрекен сассипе арӑмӗ.—Пире темӗн тума пултараҫҫӗ.

Ваҫук пит тарӑн шухӑша кайрӗ. Ҫӑнах та ҫав, хӑварса тухса кайатӑн, кунта та ҫитсе перӗнме пултараҫҫӗ вӗсем.

— Айта манпала!

— Тырра кам пуҫтарӗ? Аҫаллӑ сын, ӑҫтан... — каласа пӗтерейменрӗ Тарук, пыр тӗпне темӗскер ҫӑмӑркки килсе капланҫӗ.

— Сире кам та кам, мӗн те пулсан усал тусан, таварӑнсан кӑтартӑп епӗ ӑна хӗрлӗ квартейтсӑ мӗн иккенне! Ну, пуҫтар йапаласене! Кайас тӑк, кайас пулаӗ. Хамӑр вӑлаҫа хамӑрӑнах сыхлас пулаӗ.

Кӗҫтенкки амӑшӗ ӑна ҫул ҫине пӗр пӗҫӗкҫӗ хутаҫ ҫине апат-ҫимӗҫ тата кӗпе-йӗм хатӗрлеме пуҫларӗ.

— Епӗ ҫаплипех пыратӑп, ҫӑкӑр ытларах ҫик, Тарук кин, пирӗн пӗҫерни ҫукҫӗ, пайан кӑвас хунӑ,—терӗ Хӗритун пиҫҫе.—Икӗ ҫынлӑх ҫик! Саплашӑпӑр кайран, сывӑ йулсан с а п л а ш ӑ п ӑ р ҫ к е ӑна,—хушса хуҫӗ вӑл.

Хӗвел ансан сулхӑнпа утма аван тесе кайма тӑҫӗҫ.

— Ђипер йул, Тарук, хăçан курассиче пĕлместĕп, вăрçă вăйă ĕçĕ мар вăл, анђах... йĕрсе куçна ан пăс çапах та. Кĕçтенккийе авантарах асту,—тет Ваçук арăмĕ çине пăхса. Хăйĕн темме сасси ђĕтрет, те ађине асăннипе, те Тарук йĕнипе.

Тарук ађа мар, упăшки хĕрлĕ квартине каймa кирлине вăл аван пĕлет, Совет влаçне, ĕçлекен халăх влаçне сыхлама кирлине хĕрарăм пулсан та сисет вăл. Керман вăрçинђен килнĕренпе Ваçук ăна нумай каласа кăтартнă. Хăй вăл комуниссен парттине мĕншĕн кĕнине, Совет влаçĕ—хресђенсене мĕнле çăлăнăç панине, çаксене пурне те каласа ăнлантарнă иртнĕ пилĕк уйăх хушшинђе, упăшкин каймаллине ăспа аван пĕлет вăл, анђах темме куçĕсем ирĕксĕрех шывланаççĕ, темшĕн унăн ђĕри ыратать.

— Сывă пул!

— Сывă пул тепре куриђђен,—ыталаса хытă ђуптурĕ ăна Ваçук. Унăн та куççљусем шăпăртатаççĕ.

— Ыран кайсан... авантарах пулмĕши?—аран каласа хуђĕ Тарук.

— Ма ырана хăварас, пурпĕр мар-и? Хăть пайан, хăть ыран. Пурпĕр каймалла, каймаллах, Тарук.

— Е-ей, нăшăлтатрĕç пĕђĕк ађасем пек,—вĕсен кăмăлне пусарас тесе хытă сасăпа хускатса йађĕ Хĕритун.—Тупнă сăмах! Калăн, таçта мур шăтăкне кайать. Епĕр сахалăним? Нађђасра çĕмĕрсе тăкатпăр. Акă курăн, Пукрава киле таврăнатпăр. Есĕ пире ваљљи авантарах сăра туса хур,—терĕ вăл Тарук йеннелле çаврăнса.—Упăшкин кăмăлне пу-

сарас выранне, вăл кирлĕ мара калаçса унăн кăмăлне хуçат. Керман вăрçинђе икĕ çул ытла çӳресе килђĕ, таврăнђĕ вĕт. Керман вăрçинђе унта, ай-йай, кунти пек кăна пулман. Тупă сассипе хăлха илтми пулађђĕ. Ку мĕске-е-е-р.

— Вăл çапла та, килтен тухса кайма пит çăмăлах мар вăл, Хĕритун пиђђе!—тет Ваçук хутаçне çурăм хыçне çакса.

— Утса тухаймасан, тăвата уранăн упаленсе тух еппин,—Тарук кăмăлне çавăрасшăн каларĕ Хĕритун. Тĕрĕсне каласан хăйĕн те унăн кăмăлĕ хуçăлнă та, анђах вăл çынна палăртасшăн мар.

Ашшĕ хутаççине тӳрлеткелен пек турĕ те Кĕçтенккийе аллине тытрĕ.

— Ну ђасрах ӳс, ывлăм! Епĕ килиђђен пысăк пул! Аннӳпе урăх апла ан тавлаш!—тесе хытă ђуптурĕ те, Хĕритунпа васкаса тухса кайрĕç. Амăшĕ выртса йĕрсе йулђĕ.

— Ма йĕретĕн, анне?

— Нимĕн те пĕлместĕнха есĕ, ађам. Кил, салтăнтарам, çывăр!—Çавăнтан вара Кĕçтенкки ашшĕ килте курăнми пулђĕ.

Пĕр кун иртет, вунă кун иртет, миçе кунне Кĕçтенкки шутласа та кăлараймасть, ашшĕ таврăнмасть.

— Атте хăçан таврăнать?—ђас-ђасах ыйтать вăл амăшĕнђен.

— Пĕлместĕп, ађам.

Халиђђен урамра выљаса çӳређђĕ, анђах ĕнертенпе ниçта кăлармасть ăна амăшĕ. Çавă пит кан-

сĕр. Унăн йулташĕсем: Микки, Пађук, Ахвађ та ниçта тухмаççĕ, тарăхаççĕ. Аптранă йенне ашшĕ вăрçăран илсе килнĕ, пĕр пуçĕ хĕрлĕ, пĕр пуçĕ кăвак, хулăм кăранташ тата кивĕ канверт илђĕ те карттин тума тытăнђĕ. „Ку Микки, ку Ревлен, акку епĕ —кукăр-макăр çыркаласа лараť.

— Пăхха, анне, епĕр йепле ђупатпăр, лашалла выђђатпăр!—тет вăл çурăк канвертне амăш патнелле тăсса.— Пăхсам кунта, хамах турăм.

Алăка пĕри шаккаť. Амăшĕ, ăна илтсен, лăпкăларнă çĕртен шартах сикрĕ.

— Кам унта?

— Епĕ, уç, Тарук кин.

Пађђа пырса кĕђĕ, çара пуçăн, çухине йанă. Ĕнси, кăкăрĕ, аллисем хĕвелпе пиçсе хуралса кайнă унăн, пиђĕ тăрăх тар йухаť. Кĕçтенккисен кӳрĕши вăл, ăна Кĕçтенкки те паллаť.

— Хӳме урлă каçса кĕтĕм, сана ырă хыпар калама килтĕм,—терĕ вăл кĕрсенех Тарука.—Хĕрлисем пирĕн, хамăр йалтан ултă çухрăмра çеç тет, ыранпайан кунта килмелле тет, кăсем тарма та шухăшлаççĕ иккен,—Тарук хăлхи патнех пырса пăшăлтатса калаť вăл.— Сыхлан, çиллипе тем тума пултарĕç сана пĕђђенскере. Вĕсенђе шанăç çук. „Кам упăшки Хĕрлĕ квартире, кам комунис“ тесе тĕпђеççĕ тет. Пуйан Прахур каласа панах ĕнтĕ вĕсене. Аслисем ун патĕнђе пурнаççĕ.

— Епĕ халĕ те алăка питĕрсе ларатăп. Нимĕскер ĕç тума алă çавăрăнмасť.

— Каккуй унта ĕç, ђĕре пĕр вырăнта тăма пĕлмест. Хаљ килсе темĕскер тăвĕç тесе сехре хăпаŤ. Анаткасра вăн, Михаљана, ватăскере, ывăлна ма Хĕрлĕ квартийе йатăн тесе, саламатпа çурăмĕ кăвакарса тухиђђен хĕртнĕ, тет. Хăçан кăна куçран çухалĕçши! Хирте тырă тăкăнса выртаŤ вĕсен пирки. Самана! Çитрĕ хĕсĕк самана! Йе пĕр-пĕринпе килĕшсе пăрахмалла пĕрех май,—кукша пуçне хыçкалаŤ Паљља.—Çуртырри сайа кайаŤ. Хăçан пĕтетха ку вăрçă, хăçан куçран çухалĕç çак урамра, куçĕсене ђарса, пăшалпа çынсене хăратса çӳрекен салтаксем. Ыраш кĕлтисене те кӳмелле. Хăйсем никама та ниçта кăлармаççĕ. Тыррине илме пĕлеççĕ ăна, халăх кĕлетĕнђи сĕлле, лашасене çитерме тесе, пĕтĕмпех илђĕç, намăссăрсем. Михаљан пĕртен пĕр лашине илсе тухнă. Пĕр салтакĕнђен „хире кайма йураŤи“ тесе ыйтрăм та, вăл, усал вăкăр пек, шурă куçне çавăрса пăхрĕ ман çине.

— Кăна куратни?—терĕ вăл пăшалне кăтартса.—Хĕрлисем патне тарма шутлатни?—хушса хуђĕ вăл. Алла сулса пӳрте тарса кĕтĕм. Тырă тесе вилеймĕн, вăл çапса та пăрахĕ, çăва патне. Вăт мĕнле ĕçсем, Тарук.

— Хăвăнтан ху хăраса çеç ларатăн, пурнăç пулаŤи капла?—пуçне çĕклесе сăмах хушса хуђĕ Тарук.— Ваçукпа пĕрре кăна курса калаçăттăм. Вăл та çав есĕ калакан, пиртен ултă çухрăмра тăракан çарăн ушкăнĕнђехи тен?

— Кам пĕлет, пулĕ те çав. Ну епĕ кайамха, çавна калама çеç килтĕм,—терĕ вăл алăк патнелле утса.

— Есӗ мӗн ӗҫлесе ларатӑн тата?—ҫут ҫеҫ пырса таптаҫҫӗ вӑл урай варринҫе выҫаса ларакан Кӗҫтенкки ҫине.

— Карттин тӑватӑп!—пуҫне ҫӗклерӗ Кӗҫтенкки Паҫҫа йеннелле:—Микки ма килмест?

— Есӗ ма пымастӑн, вӑл та ҫавӑнпа килеймест. Тухха унта урама. Кӑгартӗҫ сана тӗнҫе! Ваттисем те тухма хӑраҫҫӗ. Ну, ҫипер йулӑр, питӗр алӑкна!— терӗ те тухса кайрӗ...

Паҫҫа тухса кайсанах амӑшӗ алӑка питӗрҫӗ те паранкӑ шуратма тытӑнҫӗ. Хуйхӑ тесе кунӗпе ҫимесӗр лараймӑн. Халӗ те иртенпе вӗри йашка ҫимен.

Шухӑшӗ унӑн упӑшки ҫинҫех:

— Ӑҫта ҫӳретши Ваҫук, мӗнле унӑн сывлӑхӗ? Кам пӗлет, хаҫҫен вилнӗ те-и тен?

Ҫак хӑрушӑ шухӑш унӑн пуҫне пырса кӗрсен ҫӗри хӑвӑрттӑн тапма пуҫларӗ Вӑй кайнипе алӑсем хӑйсемех усӑнса анаҫҫӗ.

Пӑҫӑ пӳртре шӑнасем вӗлле хурҫӗсем пек сӑрӑлтатса вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Кӗҫтенкки урайӗнҫе ҫапкаланса ҫеҫ ларать.

Шӑнасем питех хӑрамаҫҫӗ унтан, кӑшт вӗҫеҫҫӗ те татах питкуҫ ҫине пырса лараҫҫӗ.

Каҫпа амӑшӗ „каҫакана ҫиме парас“ тесе пӑлтӑртан тухса урине пусма ҫине йарса пуснӑҫҫӗ ҫеҫ, ҫил хапхаран пӗр салтак кӗнине курсан, хӑранипе нимӗн тума пӗлмесӗр, алӑк йанаххинҫен тытса кӑшкӑрса йаҫӗ.

— Айӑпӑ пурне сисетним, мана курсанах кӑшкӑрса йатӑн!—тесе, пысӑк сарӑ пуҫҫинкӑллӑ урисемпе,

пăшалне хăрах аллипе тытса пыђĕ ун патне хăрушă салтак.—Ваççили Илйиђ арăмĕ есĕ пулатни?—йарса тытрĕ вăл аллипе пăлтăр алăк хăлăпĕнђен.

Тарукăн çав тери хăранипе пуçĕ çавăрăнса кайрĕ, çавăнпах та, салтак ун патне çитиђђен тарса кĕреймерĕ вăл.

— Ма ђĕнместĕн? Упăшку ăçта?

— Пĕлместĕп,—аран каласа хуђĕ вăл ун çине çилĕллĕ куçĕсемпе пăхса. Çапла каларĕ те пăлтăра кĕме тытăнђĕ.

— Стой! Кайаймăн! Кала тĕрĕссипе, ăçта санăн распайнĕкў? Кăна куратни?— Кăтартрĕ вăл пĕрешкеллĕ пăшалне.—Суйсан çакăнтах шăммăна ислетсе хăваратăп. Ну!

— Пĕлместĕп, тенĕ сана! Епĕ, хĕрарăм çын, ăçтан пĕлем? Вилнĕ вăл манăн,—терĕ те сасартăк пăлтăр алăкне пĕтĕм йулашки вăйĕпе тĕртсе, пăлтăра ђупса кĕрсе карĕ.

— А-а, есĕ çапла-и?—йарса тытрĕ ăна аллинђен пăшалне пăрахса хăрушă салтак. Унтан пилĕкĕнђен хытă пăђăркаса илђĕ те, тусанлă урайне çĕклесе çапрĕ.

— Распу-у й, кăраву-у-л!—пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса йађĕ Тарук.—Вĕлерес тетним есĕ мана, ђунсăрскер, распуй!—вăй кайнипе ђĕтрекен сассипе кăшкăрат Тарук.

Çав вăхăтра амĕш сассине илтсен, пўртре урайĕнђе выљљаса ларакан Кĕçтенкки çăмха пек сиксе тухрĕ те кăшкăрса йĕрсе йађĕ.

— Анне-е! Тăр, анне-е!—турткалаť вăл хăйĕн пĕђĕк аллисемпе.—Ма хĕнетĕн манăн аннене, акă аттене каласа парамха сана,—тапăртатса, сасăпа кăшкăрса йĕрет Кĕçтенкки.

Салтак, те сасă пулнипе хăраса, хăвăрт сиксе тăђĕ те аллине пăшалне йарса тытрĕ.

— У-у-у шуйттан çури! Хырăмăнтан тапса ывăтăп акă!—усал вăкăр куçĕсене çавăркаласа хăмсарђĕ вăл Кĕçтенккийе.

Кĕçтенкки ним те илтмест, хăйĕн çемçе, пĕђĕк аллисемпе амăшне ыталаса илнĕ те унăн хуйхăпа пĕркеленнĕ, куççуљпе йĕпеннĕ пиђĕсенђен ђуптăваť, хăй те амăшпе пĕрле ĕсĕклесе йĕрет.

— Тăр, айта, сана штапа ђĕнеççĕ, сволăђ,— кăшкăрса пăрахрĕ салтак урайĕнђе йĕрсе выртакан Тарука.

— Персе пăрах пăшалупа, иксĕмĕре те персе пăрах,—ђĕтрекен сассипе каларĕ Тарук, ура çине тăрса.

— Пер, ма пеместĕн? Есĕр вĕреннĕ вĕт!

Салтак çиллине шăнараймасăр шăрăхпа аптранă йытă пек хăвăрттăн сывлаť, хăрушă куçĕсемпе шăтарас пек пăхаť Тарук çине.—Çыхса илсе кайассине кĕтетним?

Тарук, ĕсĕклесе тăракан Кĕçтенккийе çавăтрĕ те, пуçне усса утрĕ урамалла.

— Хăвăртрах ут, есрел çури,—ђышаť Кĕçтенккийе çурăмĕнђен вĕсен хысĕнђен пыракан салтак пăшал куђĕпе.

— Астуха, анне, мĕн çурăмран ђышса пыраť мана, çак усал,—урамра ађасем хĕнесен амăшне каласа панă пек йынăшса калаť Кĕçтенкки.

Амăшĕ ăна аллисенђен вăрттăн хытă ђăмăртарĕ, хăрах куçĕпе тилмĕрсе пăхса илђĕ:

— Ан шавла!

Кĕçтенкки ăна-кăна пĕлмест, çапакан, тĕртекен çынна вăрçасах пулаť.

— Акă, атте таврăнсан, аттене каласа парапха епĕ ăна, вара пĕлĕ вăл çурăмран ђышма!—нăшăклатса ђакăр куçĕсене сĕркелет Кĕçтенкки.

— Ут, ут айта, есрел çури, супĕлтетсе ан пыр! Халăх йепле усала вĕреннĕ, ут хăвăртрах!—васкатаť таçта амакăн шăтăкне тискер салтакĕ.

Пуп çуртне илсе пыђĕç вĕсене. Малти пÿртрен тутлă апат хыççăн, хулăм тутисене кушак аçи пек çулакаласа, нађђалнĕкĕ тухрĕ. Хулпуççийĕсем çинђе унăн çап çутă пакунсем. Тем сарлакĕш калихве, хулăн, мăнтăр тăлăп, пÿне тăп тытса тăракан френђ тăхăннă. Икĕ аллине те кĕссине ђикнĕ вăл.

— Хĕрлĕ квартейтсă Ваççили Илйин арăмне илсе килтĕм, вашшĕ плохороти,—терĕ салтакĕ аллине пуçĕ патне çĕклесе.

— Йураť. Ку кам тата?

— Ађи пулас, вашше плахороти!—татса хуђĕ салтак.

— Упăшку ăçта санăн?—шăтарас пек пăхса ыйтрĕ нађђалнĕк.

— Пĕлместĕп, хăшĕ вилнĕ теççĕ.

— Тÿрипе кала!

— Епĕ суймастăп.

Çак тискер çынсен умĕнђе суйса каламаллине Кĕçтенкки те çамрăк ђĕрепе сисме пуçларĕ. Хаљђђен амăшĕ „аçу ђас таврăнаť“ тесе йăпататťђĕ ăна, кашни кунах кĕтетђĕç, кăсене урăхла калаť. Тӳррипе калама йураманнипе амăшĕ суйаť пулĕ унăн. Вăл хăранипе амăшин кĕпи аркинђен çавăрса тытнă та куçне илмесĕр нађђалнĕке пăхса тăраť.

— Çирĕм. Ку? Илсе кай!—кăшкăрса пăрахрĕ офитсер алăк умĕнђе тăракан салтака.

Тарук çак сăмахсем мĕне пĕлтернине çавăнтах сисрĕ. Саламатпа çурăмран çирĕм хут çапмалла тени пулаť ку. Алурисем сиксе ђĕтреме пуçларĕç унăн, тутисем темскер каласшăн—калаймаççĕ, ђĕлхи çыхланаť.

— Çак ађана та хĕрхенместĕр пулаť ĕнтĕ есĕр, нимĕнсĕрех пуйансем каласа елекленипе асаплантарасшăн есĕр мана,—йăлăнаť вăл нађђалнĕке типшĕм аллисене тăскаласа.—Мĕнле усал ĕç тунă вара епĕ.

Тискер офитсер ылттăн шăлне кăтартса кулса тăраť. Çав тери тискер туйăнђĕ вăл ăна çав вăхăтра.

— Ну, кайрăмăр—сĕгĕрет ăна алăк патĕнђе хаљђђен йупа пек тăракан салтакĕ.

Вăрăм, хăрăм пек çӳçне сăгăркаласа малти пӳртĕнђен пуп тухрĕ.

— Ман хута кĕрсем, ырă пађă икă, тархашшăн ан хĕнеттер мана, пађăшкă!—ђăркуçланса ларђĕ Тарук пађăшкă умне.

Кĕçтенкки хăранипе ђĕгресе сасăпа йĕрсе тăраť амăшĕ çумĕнђе.

— Епӗ ниmӗнле усал ӗç те туманçке! Ма ман çине тӑрӑнђӗçха вӗсем!! — ӗсӗклесе йӗрет Тарук пађӑшкӑ умӗнђе.

— Анне, айта киле!—лӑскаŤ ӑна кӗпе çаннинђен Кӗçтенкки.

— Ман мӗн ӗç, епӗ ним те тума пултараймастӑп, Тарук, политтӗк ӗçне хутшӑнмастӑп, манӑн турӑ ӗçӗ!—тесе пӗрре шурӑ офитсер çине, тепре урайӗнђе ђӑркуççи çинђе ларакан Тарук çине йӑваш сассипе каласа хуђӗ пуп,—тӑр ура çине. Йӑлӑн çавсене, манран килмест ку.

— Йӑлӑнатӑп та, итлемеççӗ, тем пек йӑлӑнатӑп! Пуппа шурӑ офитсер темӗскер лӑшӑлтатса калаçççӗ. Кӗçтенкки сасӑпа ахӑрса йӗрет, пӗр алӑк патӗнђе тӑм йупа пек пӗр сиккелемесӗр тӑракан салтак çеç ӑнтан кайнӑ, ним тума пӗлмест.

— Тӑр, каймалла!—пырса тӑратрӗ вӑл кӗпинђен тытса Тарука.—Паçӑр мана итлемерӗ. Тӑр, тенӗ сана,—хытӑрах кӑшкӑрђӗ тепӗр хут.

Пупӗ малти пӳртне кӗрсе кайрӗ, шурӑ офитсер калихве кӗсйинђен пирус кӑларса тивертсе йађӗ.

— Илсе кай, пиллӗк çитӗ еппин, вилӗ таçта,— çаврӑнса кӗрсе кайрӗ вӑл та малти пӳрте:—кайран, упӑшкине тытсан, ытларах хӗртӗпӗр.

— У-у, тискер кайӑксем!

Амӑшпе Кӗçтенккийе хурал пӳртне илсе кайрӗç. Унта çитсен пӗтӗм сассипе çухӑракан Кӗçтенккийе пӗри тытса илђӗ, амӑшне икӗ салтак хурал пӳртне илсе кӗрсе саламатпа хӗнеме пуçларӗç. Амӑшин сасси пӗтӗм урама йан йантраŤ.

— Ей турӑ, турӑ, ӑҫта есӗ, турӑ, ҫаксене мана мӑшкӑлаттаратӑн.—Ай-йай, вилетӗп!—илтет Кӗҫтенкки амӑшин сассине.

Вӑл та вӗҫерӗнсе амӑшӗ патне кайас тесе ӑна тытса тӑракан салтака аллинҗен виҗкӗн шӑлӗсемпе ҫыртса илҗӗ, салтакӗ ӑна питӗнҗен ҫатлаттарса ҫупса йаҗӗ.

— Ак сана, есрел ҫури! Йепле усал вӑл!—хӑратаҭ ӑна тепӗр аллипе тискер салтак,—алла ҫыртма-и?

Амӑшӗпе иккӗш аран киле ҫиткелесе ӳкрӗҫ.

— Акӑ пӑх, аҗам, ҫурӑма мӗн турӗҫ шурӑ, тискер салтаксем,—куҫҫуҙ виттӗр кӑтартаҭ кӑн-кӑвак кӑвакарнӑ ҫурӑмне амӑшӗ.—Ҫакна никҫан та ан ман, аҗам. Тулӗха шалҗи вӗсен те!—аҗине ыталаса йӗрет амӑшӗ.

Тепӗр ирхине ӗҫлеме те тӑраймарӗ Тарук, вырӑнтах выртаҭ. Кӗҫтенкки ун пуҫ вӗҫӗнҗе выҙҗаса лараҭ, ӗнер мӗн пулнине пайан маннӑ вӑл.

— Атте хӑҫан килет, атте?—ыйтаҭ вӑл җас-җасах амӑшӗнҗен.—Ма хаҙ те килмест?

— Пӗлместӗп, аҗам, пӗлместӗп, те сывӑ ҫӳретха вӑл, те вилнӗ.

Питӗрнӗ пӳрт алӑкне йерипен шаккарӗ пѐри пӑлтӑртан.

— Кам вӑл?—сасӑ паҗӗ Тарук пуҫне хӑпартса.

— Епӗ, Тарук инке. Кришша. Калаҫма килтӗм. Уҫха, Кӗҫтенкки.

Кӗҫтенкки сак ҫинҗен сиксе анса алӑка уҫрӗ те салтаксем амӑшне йепле хӗненине, пѐри хӑйне питрен ҫутатса йанине калама тытӑнҗӗ.

— Акӑ ҫапла ҫапса йађӗ мана, усалскер. Кайса хӗнеха есӗ ӑна, Кришша пиђђе!

— Илтрӗм, илтрӗм, каласа пађӗҫ. Мана тухма йурамасҭ, кунта та вӑрттӑн ҫеҫ, хыҫалтан килтӗм. Пайан тата хытàрах сыхлама пуҫларӗҫ,—тет вӑл ахлатса выртакан Тарук патне пырса.

— Хаљ хӗнейместӗп, анђах вӑхӑт ҫитӗха, Кӗҫтенкки шӑллӑм, тавӑрӑпӑр, пуриншӗн те тавӑрӑпӑр,—пуҫӗнђен шӑлаҭ Кришша.—Вырӑнпах выртатни? Ну йепле те пулин ђӑтас пулаҭ. Хӗрлисем ҫывхараҫҫӗ тет. Ҫавна калама килтӗм.

— Кам каларӗ сана? Йе ахаљ ҫеҫ савӑнтаратни есӗ мана?—аллипе тайанкаласа тӑрса ларђӗ Тарук Вӑрӑм, сарӑ ҫӳҫӗсем унӑн ҫурӑм тӑрӑх саланнӑ, куҫӗсем анса ларнӑ, аллисем темме ђӗтреҫҫӗ.

— Йури мар, акӑ курӑн, ђас хӑваласа йарӗҫ. Анђах,—шӑппӑн, Тарук хӑлхи патнех пырса каларӗ вӑл,—пӗлес пулаҭ. Ёнер ҫӗрле кайма тухрӑм, уйӑх ҫути, йалтан нийепле те тухса пулмарӗ, пур ҫӗрте те салтаксем тӑраҫҫӗ. Мèн тӑвас?

— Мӗн тӑвас тетӗн, нимӗн тума та ҫук.

Нумайђђен пӑшӑлтатса калаҫса ларђӗҫ Кришшапа Кӗҫтенкки амӑшӗ. Хӑш ђухне амӑшӗ пуҫне усса нумайђђен пӗр сиккелемесӗр шухӑшласа лараҭ.

— Ытла ҫамрӑк ҫавӑха вӑл, ҫамрӑк ҫав, нимӗн те пӗлмест,—тет Кришша ҫине пӑхса.

— Тыгӑнса пӑхнин сийенӗ ҫук, кайаймасан киле. Ҫавӑнтах, Пӑвaран килнӗ теҫҫӗ, Ваҫук упӑшку тем каласан та ҫавӑнта. Тӑват-пиллӗк ҫухрӑм ҫеҫ хушши те. Ну мӗнле шухӑшлатӑн? Е?

— Пĕђђен епĕ мĕн тăвăп?

— Капла ларса та нимĕн тухмасť, Тарук инке. Çынсене ниçта та кăлармаççĕ, хамах кайнă пулăттăм-та, çук, кайма май çук. Кайса систересех пулаť. Вăт вара упăшку та килет. Ађасене ђарма пултараймаççĕ вĕсем, ађапăђа вăл таçта та ђупса çӳрет.

Кĕçтенккийе пĕр·икĕ сехете йахăн, вăл мĕн тăвассине, салтаксем, йе ытти çынсем „ăçта кайан“ тесе ыйтсан, вăл мĕн каламаллине, парса йанă çырăва çул çинђе никама та кăтартмалла маррине, тата темскер те каласа ăнлантарђĕç.

— Хире пăрçа татма кайап те, салтаксем ăçта кайан тесе ыйтсан.

Çав тери ответлă, пысăк ĕç хушнипе Кĕçтенкки ђĕри сиксе тухас пек тапаť, пит савăннă, вăл ăна пысăк ĕç хушнипе. Вот ăна пĕђĕкçĕ ађа теççĕ, хаљ пĕђĕкçĕ мар ĕнтĕ вăл. Ăна йепле ĕç хушаççĕ. Аш шĕне те кураť.

— Картусĕ çинђе хĕрлĕ çăлтăр çакнă пулсан, йе кăкăрĕ çине хĕрлĕ пусма çакнă пулсан, вĕсем хĕрлисем, пирĕн тăвансем пулаççĕ, илтрĕни?—ăнлантараť ăна Кришша тетĕшĕ. Хулпуççи çинђе саплăк пек çĕленĕ пакунсем пулсан, йе аллисене шурă пусма хывнă пулсан, шуррисем, пирĕн тăшмансем вĕсем. Çырăва хĕрлисене пар, шуррисене ан кăтарт, кăтартсан сана хĕнесе пăрахма пултараççĕ. Илтрĕни?

Кĕçтенкки урхамах пек пуçне сулласа çеç тăраť. „Мĕн хăраттăр, хамах пĕлетĕп“ тет вăл ăшĕнђе.

— Туçа йалне пĕлетĕн вĕт есĕ?

— Пĕлетĕп, унта кукка пур пирĕн.

— Вăт çавăнта, куккусем патне кĕр, Ахванеç кукăна каласа пар. Аçу çав йалта.

Ăна çĕнĕ кĕпе тăхăнтарђĕç (пуйан ађи пек туйăнтăр), ђăлхи ăшне çыру хурса, ашшĕ туса панă пĕђĕк çăпатине сыртарђĕç (мĕншĕн сыртăн тесен: «ура шыçнă» теме хушрĕç), пĕр пĕђĕк çеç хутаç çактарђĕç.

— Ну, ађам, те курайап сана, те кураймастăп, сывă пул,—ыталаса хытă ђуптурĕ ăна амăш ĕсĕклесе йĕрсе.

— Ма йĕрен, анне? Епĕ çитеп те килеп вĕт.

Кĕçтенккисен икĕ ђӳређеллĕ кивĕ, пĕђĕк пӳрђĕ йал хĕрринђен инçе мар, сăрт çинђе ларатĭ, анђах урам тӳрĕ маррипе вĕçĕ курăнмастĭ, çӳллĕ хăвасем хупласа ларaççĕ.

Мĕн куçран çухалиђђен амăшпе Кришша ђӳређерен ђĕнмесĕр тилмĕрсе пăхса тăђĕç Кĕçтенккийе.

Кришша каланисене пит те аван астăватĭ вăл. Акă кантăр ани, кунтан йăранпа тухсан аслă çул пулатĭ, унпа каймалла мар, унтан сулахайарах çулпа, кайран вăл та аслă çула тухатĭ...

Çул çинђе курăк вăйлă, тусан çук, аслă çул çинђи пек пит тусанлă мар. Хĕвел ђăтма çук хĕртет, çил те çук. Хăш ђухне унăн умĕнђенех тăрисем пăр-р туса вĕçсе кайаççĕ те çӳлте йурлама тытăнаççĕ.

— Тăр, тăр, тăри-и, тăри-и!—илтĕнет ăçта çитнĕ унтан.

Çулăн икĕ йеннипе шуралнă сĕлĕ, йешĕл вирсем вăхăтран вăхăта килекен ăшă çилпеле хумханса лараççĕ...

Хаԁ Кĕçтенкки хăрамасҭ ĕнтĕ, йалтан инçе кайнă. Пĕр-иккĕ хытă ԑупсан сăрта çитет, çав сăрт çинԑен Туçа йалĕ курнаҭ вара. Ашшĕпе те, амăшĕпе те нумай кайнă Кéçтенкки вăл йала.

Инçетре темскерле сасă илтĕнет,—такамсем калаçаççĕ. Кĕçтенкки, шăши пек, сĕлĕ ăщне тарса кĕԑĕ, ним ԑĕнмесĕр йерипен сывласа лараҭ. Иккĕн йулан утпа пĕр-пĕринпе, ăнланман ԑĕлхепе калаçса ҭиртсе кайрĕç.

Вĕсем курăнми кайсан Кĕçтенкки сиксе тăԑĕ те ԑупрĕ малалла. Сăрта çитерехпе пăрçа ани çине выртрĕ. Кĕçтенкки ԑупса шалах та кĕрсе кайрĕ те шултра хутаçлă пăрçана татса çиме пуçларĕ. Йешĕл пăрçа çав тери тутлă, çисе тăранма çук. Амăшĕ парса йанă хутаçне пăрçа татса тултарԑĕ.

— Аттене çитереп, — шухăшлаҭ вăл:—ак куна таврăнсан аннене парап, ку Кришшана, ку Миккине.

Хăйсен йалĕ йенԑе пăшал сасси илтĕнԑĕ. Кĕçтенкки тăԑĕ те, ԑупрĕ сăрта çитиԑԑенех.

Сăртран Туçа йалĕ йем-йешĕл курăнса лараҭ, сатпахԑисен айне путнă вăл йал. Панулми нумай пулаҭ Туçа йалĕнԑе.

Йала çитерехпе çул икĕ йенне уйăрлса кайаҭ: пĕри ԑиркӳ патнелле, тепри анат касне.

Акă йала çитерехпе хăйсен йалĕнԑи пек кантăр анисем пуçланԑĕç.

Анкартисем патне çитсен ăна пĕри кăшкăрса пăрахрĕ.

— Кам унта?

Кĕçтенкки ђарăнђĕ те, унталла-кунталла пăхкалаť. Никам та курăнмасť. Сисмен çĕртенех пăшал лă, курăк пек симĕс кĕпепе салтак тăраť. Çĕлĕк те симĕс, кантăр çумĕнђе паллама та çук. Кĕçтенкки хăраса ўкрĕ. Салтаксенђен хăракан пулђĕ вăл амăшне хĕненĕ хыççăн. Авантарах пăхрĕ те—çĕлĕкĕ çинђе унăн хĕрлĕ çăлтăр пур.

— Кам ађи есĕ?—терĕ салтак.

— Аттен.

— Пĕлетĕп епĕ аçунне, мĕн йатлă аçу?

— Ваçук.

— Ăçта кайрăн? Ăçтан тавăрнатăн?

Кĕçтенкки калама хăраť. Те калама йураť, те йурамасť.

— Пăрçа çийетни?

— Астуха, йепле хитре калаçаť вăл. Аçу ăçта?

— Пĕлместĕп.

— Ну кай еппин килне.

— Епĕ куккасем патне кайатăп.

Хĕрлĕ салтак нимĕн ăнланаймасť унăн сăмахĕсенђен, тем аташаť ку ађа.

— Есĕ ку йалсем мари?

— Çук!—Кĕçтенкки хăйсен йалне каларĕ.

— Ну-у?—тĕлĕнсе ăнтан кайса тăраť хĕрлĕ салтак. „Мĕн тăвас ку ађана“—шухăшлаť вăл.

— Килха кунта, ман çумма, курăк çине лар,—терĕ вăл кулкаласа.

Ку салтак хӑйсен йалӗнђисем пек тискер мар, сасси те йӑваш унӑн. Йӑпшӑнса пырса ларђӗ ун çумне. Ун хулпуççи çине карӑнса пӑхаҭ, саплӑк пекки çӗлемен.

— Мӗн пӑхатӑн? Интереснӑ хӑтланатӑн есӗ. Нуккӑ авантарах калаçар санпала. Мӗн йатлӑ есӗ?

— Кӗçтенкки.

— Йура-а-ҭ. Сирӗн йалта камсем пур унта?

— Тискер салтаксем ну-у-май унта. Çапӑçаççӗ, мана та хӗнерӗç, аннене те саламатпа хӗнерӗç. Анне ђирлерӗ. Мана куккасем патне леçсе хӑварха. Куккапа аттене шырама кайатпӑр вара.

— Мана кунтан кайма йурамасҭ. Куккусем ӑçта пурӑнаççӗ вара?

Кӗçтенкки сиксе тӑђӗ те, хӗвелпе хӗрелнӗ пӗђӗкçеç аллине çамки çине хурса йалалла пӑхрӗ.

— А-а-а-вӑ, куккасен çурђӗ, ђиркӳ хыçӗнђе, анђах кунтан курӑнмасҭ,—тӑсса кӑтартаҭ вӑл тепӗр аллипе.

— Ну кай еппин.

Кӗçтенкки сиккипе ђупрӗ анаталла.

Урамсем тӑрӑх аташса çӳресен çӳресен сасартӑк пӗр тӑвӑр урамран тухсан, куккӑшсен çӗнӗ пӳрђӗ курӑнса кайрӗ.

Паллах ӗнтӗ çавсен çурђӗ, хапхи çинђе автан пур, ђӳређи хашакӗсене пӗветнӗ, анђах куккӑшсен хапхи умӗнђе йӑмра çукђӗ, кунта çӳлӗ йӑмра лараҭ. Çук, куккасен çурђӗ мар ку.

Акӑ хапхаран пӗр çын тухрӗ, Кӗçтенккийе тилмӗрсе пӑхаҭ.

— Мĕн шыратăн есĕ, ађа? Е-ей, есĕ Ваçук ађи вĕт, сана пасарта пĕрре аçупа курсаттăм. Аçу патне килтĕни?—ыйтаť вăл унтан.—Айта, куккусен патĕнђе вăл, пирĕн хыçра,—терĕ те аллинђен çавăтрĕ ăна палламан, хăмăр сухаллă çын.

Карташĕнђе куккăшĕ сунтал çинђе çава туптаса лараť.

— Çак ађана паллатни?—пырса тăратрĕ ун умне Кĕçтенккийе хăмăр сухаллă çын.—Сирĕн çурт тесе пирĕн умма пырса тăнă.

— Е-ей, Кĕçтенкки, есĕ мар-и? Ăçтан çуралтăн есĕ ăнсăртран? Ăçтан сиксе тухрăн? Сирĕн йалта шуррисем пур темеççĕ-и?—ыйту хыççăн ыйту кăлараť тĕлĕннипе Ахваниç куккăшĕ—Йепле килме хăрамарăн? Ну, Кĕçтенкк-и-и! Аçу тĕлĕнсе ăнран кайаť ĕнтĕ. Кĕр, пўртре вăл, хаљ çеç килђĕ таçтан.

— Атте те кунтаи?—савăнса кăшкăрса йађĕ те, пўрте ђупса кĕрсе кайрĕ Кĕçтенкки.

Ашшĕ пўртре пăшалне тасатса тăраť.

Кĕçтенкки кĕнине курсан тĕлĕннипе çăварне карса куçĕсене ђарса пăрахрĕ, тасатса тăракан пăшалне урайне лађах пăрахрĕ. Йуратнă ывăлне алли çине çĕклесе ыталаса хытă ђуптурĕ.

— Кĕçтенкки ывăлăм! Ăçтан килсе ўкрĕн, ађам,— тесе тепĕр хут ыталаса хытă ђăмăртарĕ.

Кĕçтенкки хăй те, йуратнă ашшĕне мăйĕнђен икĕ пĕђĕк аллипе ыталаса илнĕ те, васкаса йалта мĕн пулнине каласа параť. Вăл каланине тепĕр çамрăк хĕрлĕ салтак та пĕр сиккелемесĕр итлесе тăраť.

— Йепле тухса килтĕн, кам вĕрентсе йађĕ сана,

ђунăм. Ну, кала малалла, пĕтĕмпех каласа пар, епĕ итлетĕп,—тесе аллинђен тытса тăрат̆ ăна хаклă, пуринђен те илемлĕ ашшĕ.

Кĕçтенкки кăтра пуçне салатса, пĕђĕккĕ аллисемпе тăскаласа ашшĕне тĕлĕнмелле хыпарсем каласа парат̆.

— Кришша пиђђе вĕрентсе йађĕ мана, анне те вĕрентрĕ, хăй ђирлĕха вăл, сывмар, ăна салтаксем хĕнерĕç, пĕри мана та, атте, питрен çупса йађĕ-ĕ-ĕ — тесе сасăпа йĕрсе йађĕ Кĕçтенкки, кăтра пуçне ашшĕ кăкăрĕ çине хурса.

— Ех, ађам, кам çăлса антарђĕ сана пайан—сават̆ ăна ашшĕ пуçĕнђен.—Малалла кала. Аннӳ мĕнле выртат̆?

— Анне сывмарланђĕ, çурăмĕ кăн-кăвак, атте, пит хытă йĕтĕмĕр унпала епĕр. Аçу ăçта тесе аптăрата̧çĕ,—сăмахне каласа ĕлкĕреймест Кĕçтенкки,—Кришша сана çыру парса йађĕ.

— Ăçта çырувĕ?

— Ђăлха ăшĕнђе, ђимха, урана салтам.

Ашшĕ ăна урайне йађĕ те пуçне икĕ аллипе икĕ йенђен хĕссе, ним ђĕнмесĕр, пĕр вырăна пăхса кăларса ăнтан кайса тăрат̆.

— Акă, ме çыру,—тăсрĕ ăна ђăлхи ăшĕнђен тарпа хуралнă, хутпа ђĕркенĕ çыру.

— Акă, ме тата, пăрçа çийетни?

Ашшĕ Кĕçтенкки панă çырăва васкаса вуласан йуратнă, паттăр ывăлне тепĕр хут хытă ђуптурĕ те „ес ларха, епĕ нађђас килетĕп“ тесе ђупса тухса

кайрĕ, тата çавăнтах, ним тума пĕлмесĕр калла пӳрте ђупса кĕђĕ.

— Хветĕр, кăмантира ђупса кайса ђĕнсе килха, ырă хыпар илсе килнĕ те, ђуп ђасрах, мĕн ăнтан кайса пăхса тăран, ђорт! Пайанах кайса хиретпĕр,— савăнса кăшкăрашаť ашшĕ.

— Çиђђас ђĕнсе килетĕп, кӳршĕређђĕха вăл, хаљ çеç куртăм,—тесе ашшĕ йулташĕ ђупса тухса кайрĕ.

Кĕçтенкки ашшĕ аллисене ђăмăртаса пӳртре ниçта кĕреймесĕр калле-малле утса çӳрет.

— Хам аллăмпа, хĕçпе тăратăп, пăшалăм алăра пулмасан шăлпа кăшлатăп çав тискер кайăксене. У-у-у, çăхансем! Çакланăрха пирĕн алла-а,—йунаť вăл аллипе.

— Мĕнле хыпар апла?—васкаса пырса кĕђĕç виççĕн. Вĕсенђен пĕри кăмантир пулнă, анђах ăна та ытти хĕрлĕ салтаксенђен нимĕнпе те уйăрма çук.

— Акă мейĕр, вулăр,—пађĕ вĕсене Кĕçтенкки илсе килнĕ çырăва.

Кăмантир текенĕ çырăва вуласа тухрĕ, тата тепĕр хут вулама пуçларĕ, Кĕçтенкки ашшĕ çине пăхса илђĕ.

— Кам илсе килнĕ ку çырăва?

— Акă манăң ађа.

— Çак шĕшлĕ-и?

— Çавă.

Кĕçтенккийе пурте йĕри-тавра сырса илђĕç. Ыйтаççĕ, калаçаççĕ, пуçĕнђен саваççĕ, пĕри ăна пĕр

катăк сахăр илсе килсе паЂĕ, ашшĕ таçтан кулаЂ пек тутлă çăкăр татăкĕ тупса паЂĕ.

— Ме çи! хырăму выçрĕ пулĕ!

Савăннипе Кĕçтенккин нимĕн те çийесси килмест. Ашшĕне, хĕвелпе сарална çинçе аллисемпе ыталанă та, йалта мĕн курнине, хăшне икĕ хут, хăшне сиктерсе хăварса каласа парaĭ. Амăшĕпе иккĕшне салтаксем хĕнени çинЂен темиçе хут та каларĕ, вăл пĕртте асран каймасĭ унăн.

— Ну, Ваççили Илйин, есĕ ху та паттăр та, аЂу санран та, пуринЂен те паттăр.—Пар кунта, ыталаса Ђуптăвам ăна,—тесе кăмантир Кĕçтенккийе аллине илсе хытă Ђуптурĕ.

-- Мĕн парас сана куншăн?

Кăмантирăн савăнăçлă пăхакан куçĕсем Кĕçтенккийе йуратса саваççĕ.

— Ортĕн, Хĕрлĕ ортĕн памалла сана куншăн! Пирĕншĕн çав тери хаклă хыпар илсе килнĕ вăл, санăн паттăр ывăлу,—терĕ кăмантир Кĕçтенккийе ашшĕне парса.

— Сисетĕп, кăмантир. Хам та тĕлĕнетĕп!

Кришша хăй пĕЂĕк çырăвĕнЂе йалта миçе патталйон салтаксем тăнине, мĕнЂул тупă, мĕнЂул пулемет, тата вĕсене ăçта тăратнине Ђăвашла ăнланмалла çырса йанă пулнă

— Куратри, мĕн тăваççĕ вĕсем пирĕн çемйесене? Куратри, йепле урса кайнă вĕсем? Пайанах наступленийе кайатпăр, пайанах хирсе тăкатпăр çав усал тăшмансене!—çилĕллĕ сасăпа, аллине çĕклесе кăшкăраĭ кăмантир.—Çапла-и, йулташсем?

— Çапла-а-а! Кӑмантир йулташ, пайанах малалла, наступленийе кайатпӑр!!!—харӑс кӑшкӑраççӗ пурте.

Малалла мӗн пулнине астумасҭ Кӗçтенкки, ывӑннӑскер, ашшӗ ҫӗрки çине ларнӑ çӗртех, пуçне унӑн вӗри кӑкӑрӗ çумне хурса тутлӑ ӑйхӑпа çывӑрса кайрӗ...

Ирпе ӑна такам урапа çине илсе тухса вырттарҫӗ. Шурӑмпуç килеспе аслати сасси пек хӑрушӑ сасӑ кӗмсертетнӗ хыççӑн хӑраса сиксе тӑҫӗ те, йӗри-тавра пӑхкалаҭ. Ҫӗрӗ курӑк тултарнӑ урапа çинҫе, ун çумӗнҫе шурӑ пӳсрен майралла çӗлетсе тӑхӑннӑ, пӗр палламан хӗр лараҭ.

Хӑранипе Кӗçтенкки йӗме пуçларӗ, такама шыраҭ, калла-малла пӑхкалаҭ.

— Ма йӗретӗн? Мӗн пулҫӗ? Çывӑр!

— Атте ӑçта-а?

— Тепӗр урапа çинҫе çывӑраҭ, ан шавла, вырт, çывӑр! Сирӗн йала кайатпӑр!—тесе йӑпатса тепӗр шинел витрӗ ун çине йӑваш сасӑллӑ хӗр.

Куçӗсем хупӑннипе Кӗçтенкки çавӑнтах тутлӑ ӑйхӑпа çывӑрса кайрӗ—пит ывӑннӑ вӑл пайан. Малта: пӑшал сасси, ура-а кӑшкӑрни, ахлатни, ура-пасем кӗмсертетни таврана йан кайаҭ.

— Ура-а! ура-а! малалла, йулташсем!—илтӗнет инçетрен сасӑсем.

Кӗçтенккийе астуса пыракан шурӑ тумтирлӗ хӗр патне пӗр хӗрлӗ квартейтсӑ ҫупса пыҫӗ. Шинелӗ хӑйӗн вӑрӑм, тӳмисем вӗçерӗннӗ. Аллине шурӑ пӳспе çыхса мӑйран çакнӑ. Шурӑ пӳсӗ пӗр йенҫе— хӗп хӗрлӗ йун.

— Хĕртетпĕр шуррисене!—терĕ вăл сывă аллипе картусне хывса. Çамки тăрăх пăрçа пек шултăра тар йухаť. Вăл урапа çине сиксе ларђĕ.

— Асту, йерипентерех, ађа пур унга,—тесе аллипе пӳлђĕ Кĕçтенккийе сыхласа пыракан хĕр.

— Кам ађи вăл? Мĕнле ађа?

— Такам ађи. Кăмантир ăна сыхласа пыма хушрĕ. Ваççили Илйин ађи, терĕ...

Аманнă салтак ăна каласа пĕтерме памарĕ, унăн пуçĕ çинђен шинелне сирђĕ те, тилмĕрсе пăхаť ун çине.

Кĕçтенкки хăрах аллине пуçĕ айне хунă, тепĕрне хăй пиђĕ çине хунă та тутлă ăйхăпа çывăраť. Шинелне уçсан пуçне силлекелерĕ те каллех çывăрса кайрĕ.

— Ех, шăлăм, шăлăм, сана куншăн темскер татса памалла!

Йала çитсен Кĕçтенккийе вăратрĕç, вăл çывăрса тăранманнипе куçĕсем хупăнаççĕ.

— Тăр! Киле çитрĕмĕр, аннӳ курасшăн сана.

— Атте ăçта?—сăтăркалаť вăл куçĕсене.

— Пӳртре. Кĕр ђасрах пӳрте. Аçу та, аннӳ те çавăнта.

Тĕлĕкри пек астăваť вăл: такам ăна вĕри куç-çуљпе питне йĕтетсе ђуптăваť, такам ăна çурăмĕн-ђен сăтăрса ађашлаť. Амăшĕ пулĕ, çавăн сасси.

Вăл куçне уçса йађĕ те йĕри-тавра пăхкалаť. Хăйсен килĕ, тĕрĕс, анђах мĕншĕн кунђул халăх килсе тулнă вĕсем патне? Хритун пиђђĕш те пур унта, Кришша та ун йеннелле пăхса кулса тăраť.

— Маттур есĕ, Кĕçтенкки,—теççĕ унăн кулакан куçĕсем. Темђул халăх йĕритавра сырса илнĕ.

— Епĕ сана çул çинђе çапса părахрĕç пулĕ тесе пит хăраса тăтăм, ађам,—савăннипе йĕрет амăшĕ.— Есĕ кайнăранпа ларса тăрма пĕлмерĕм. Ну, çийессӳ килмести?

Ашшĕ те, вăл вăраннине курсан, пырса унăн пуçĕнђен саваť.

— Керой вăранђĕ! Пайантан вара вăл пирĕн пулккăн **хисеплĕ хĕрлĕ квартейтсă шутĕнђе** тăраť. Унăн сывлăхĕшĕн ура-а,—тесе аллине тăратрĕ кăмантир.

Ура-а! ура-а! —йан кайаť урама.

Кăмантир пĕр йенелле пăрăнса кĕсйинђен шурă тутăр кăларђĕ те ирĕксĕр йухакан куççуљне вăрттăн шăлса илђĕ. Унтан сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕ. **„Хисеплĕ хĕрлĕ квартейтсă Константтин Ваççилйевиђ Илйин“** тесе çырса хуђĕ çписки çине.

# Йăвăр мар.

Матви пиђђен кăгра çӳçлĕ ђи кĕçĕн ывăлĕ Тимĕркке пайан тулта ытларах çӳресе хытă шăнса килнĕ. Сентĕре çине хăпарса выртнă та, кушак пек, сивĕпе хĕрелнĕ пĕђĕк аллисене умне хурса шухăшласа выртаť. Пӳрне вĕçĕсем, ура лапписем сăркăлтатаççĕ.

— Ытларах çӳрерĕм çав,—ӳкĕнет вăл:—инçех каймалла марђђĕ. Тепĕринђе ытла нумай çӳремеспех.

Аллисене йанах айне хуђĕ те, пăхса выртаť.

Урайĕнђе икĕ пĕђĕк пӳтек сиккелесе çӳреççĕ. Çӳресен, çӳресен алăк патне пырса пĕри макăрса йараť, ун хыççăн тепри. Вĕсен сассине илтсен карташĕнђи сурăх сас параť. Пĕђĕк ађисем патне кĕресшĕн пӳрт алăкĕ патнех пырса йавăнаť вăл.

Урайĕнђе выљљаса çӳрекеннисем иккĕшĕ те çавăн пӳтеккисем. Вĕсем ӳссе çитсен Тимĕрккене çăматă пулаť, така пулсан—кĕрĕк. Çăпатапа ура ђас шăнаť, хăť те мĕн ђул ђĕрке, сивĕ таçтан пĕр шăтăк тупаť те, ђĕпĕтет.

Пайан та вăн, кăшт çеç тăм илтеређђĕ урисене, нумай та çӳремен, ламппă çутиђђенех килнĕ.

— Ма çулла пăр пулмасťши?—пĕђĕк çамкине пĕркелесе шухăшлаť Тимĕркке. Ăшă ђухне пăр пулсан—вăт йарăнăттăмăр! кунĕпе йарăн—шăнасси

тăвасси çук, вăрăм сăхман тăхăнмасăрах, куçа хуплакан çĕлĕксĕрех йарăнĕђђĕ, анђах çулла пăр пулмастĭçкеха вăл, сивĕпе çеç пăр шăнаť.

Çук, çулла пăр кирлех те мар—шыва кĕме кирлĕ.. Шыва кĕни те пит хавас, усăллă та теççĕ. Çутçанталăк ађасемшĕн пит тăрăшаť вăл. Вĕсемшĕн кăнаи вара? Хĕлле йарăнма çŭллĕ тусем, йака пăрсем туса параť, çулла вара ђăпăлтат хур-кăвакал пек шывра. Ђеђексем тата, çырласем, улма,—шутласа та пĕтереймĕн.

— Хăçан аванши? Хĕллеи, йе çуллаи?

Çак пысăк шухăш унăн çамрăк пуçне пырса кĕрет—ђăнах та çав, хăçан авантарах, е?

Пŭтексен—хăйсен шухăшĕ, амăшĕ патне тухасшăн, тулта шартлама сиввине пĕлмеççĕ. Матĕрне карђăкпа паçăртанпа калаçса ларакан Тимĕркке амăшĕ патне пырса, уринђен сĕртĕнкелеççĕ, унтан татах макăрса йараççĕ.

— Вăхăт çитменха, анваскăр, çŭрĕр пăртак,—йăпатаť вĕсене Тимĕркке амăшĕ,—акă кĕртĕп...

Тимĕркке пысăк шухăша кайнипе хăйĕн амăшĕ Матĕрнепе мĕн калаçнине те илтмест.

— Вăрмантан тавăрăнсан аттене йĕлтĕр кантрине çĕнĕрен йавтарасха, —шухăшлаť вăл пăрланса ларнă ђŭређе йеннелле пăхса.—Татăлса кайаť те, аппалан вара сивĕре. Йе хамах йавма тытăнас, йăвăр ĕçех марçке вăл. Вошаттăй пĕркун, çав йарăнакан вырăна, шăнсан кĕрсе ăшăнмалли хŭтĕ вырăн тăвасси çинђен калаçрĕ. Хŭтĕ тусан питĕ аван пулађђĕ. Шăнсанах кĕрсе ăшăнан, хаљхи пек шăнмассерен

киле ђупсан—йаранни те мар. Уроксене хатěрлеме вăхăт çитмелле, çěр пит вăрăм...

Пўтексем сиккелесе, ђупса ывăнђěç пулмалла, кăмака патне выртрěç. Ула çурăмли теприн çине пуçне хунă. Килěштерсе пурăнаççě!

Çакăн хыççăн Тимěркке амăшě çине пăхса, вăл Матěрне карђăкпа мěн калаçнине итлеме пуçларě. Пит-куçě унăн пěркеленнě, ватăлаť ěнтě амăшě, хěрěхрен иртнě. Матěрне карђăк пуçне ула тутăр çыхнă, те пўтек пек ула пуласшăн. Кěрěк çанни çěтěк—алă кěрес пек шăтăк. Вăл калаť:

— Ей, тăхлађ, темěн те шухăшласа кăларěç ку ђухнехи çамрăксем, Мускавран калаçнине те итлеççě, машшинпа темле карттинсем те кăтартаççě (епě те кайса куртăм пěринђе), хаљ тата пурне те хут вěрентмелле теççě—хут пěлменни пěри те ан пултăр теççě. Вăт, пырса калаç вěсемпеле!

— Пире, ват çынсене, мěн кирлě, ăçта—хулана кайатпăри епěр? Хěрěх виçě çул хут пěлмесěрех пурăннă, антăраман. Хăтланђђăр ěнтě, унпа аппаланса ларма вăхăт та çук пирěн...

Тимěркке шухăшлаť: „Хутпа аппаланма вăхăт çук“ теççě... Хăйсем кашни кун пекех, килти ěçе пуçтарсан кирлě-кирлě мар калаçса вăхăт иртерсе лараççě... Сăмахсене калаçса та пěтерне пулě ěнтě; кам кампа вăрçнă, пěрин ěни пăрулани, ку ђирленě... çав сăмах вěсен. Кама кирлě вăл? Мěн усси пур апла калаçнинђен? Ну, калăпăр, пěрин ěни пăрулана пултăр, ун çинђен мěн ахаљтен сăмах сайа йарса калаçса лармалла... Çакăн пек шухăшсем кěме пуç-

ларěç Тимěркке пуçне. Шутласа тухасҫě, çапла кирлě-кирлě мар çинҫен калаçса ларса. Йалсенҫе арçынсем те, хěрарăмсем те мěнҫул вăхăт сайа йараççěши? Кěнеке-хаçат вуласан мěн ҫул усă пулмалла. Ех! Çак шухăш ăна пěтěмпех ăшăтса йаҫě. Вăл сиксе тăрса ларҫě те, пуçне шанк шаклаттарҫě маҫҫа çумне.

— А-а, му-ур... сентěре çинҫине мансах кайнă,— тесе ěнсине хыпаласа илҫě.

... Акă хаљ манăн нимěнле ěç те çук, каçпа пěр сехет, йе сехет çурă хушши йарăнса килсен те, кайран мěнҫул кěнеке вулама пулаť. Е-е-х, интереслă кěнекесем пурçке! Темěн çинҫен те калаççě. Савăтсем, колхоссем çинҫен... Ěлěкхи пурнăç çинҫен, революутсионерсем ирěклěхшěн çапăçнисем çинҫен. Ҫирсенҫен йепле сывални çинҫен: траххом халапě, йумахсем, т. ыт. те. Акă анне куçě темме шывланса тăраť. Траххом-и тен? Анне куççăрланма пултараť. Кěнеке вуласа парасҫě, еп вуланине итлешшěн мар, йе „вăхăт çук" тет, йе „ес çамрăкскер мěн пěлен" тет. Хăйне хут вěрентсен аван пулěҫҫě, анҫах йепле тытăнас, йепле итлеттерес ăна?

* * *

Пěрре апла амăшě каçпа, „ěç пěтсен" кўрше кайма тумланма пуçласан, çěтел хушшинҫе кěнеке вуласа ларакан Тимěркке—ăçта кайма тумлантăн, анне? тесе ыйтрě унтан.

— Кўрше кайса калаçса ларашшăн та...

— Ман санпа калаçмалли пур. Калаçари? Есĕ манпа калаçма вăхăт та тупаймастăн?—терĕ ÿпкелешнĕ, хурлăхлă сасăпа Тимĕркке.

Ăшă тутăр çыхса тăракан амăшĕ йăвашшăн тĕлĕнсе пăхрĕ ывăлĕ çине. Темĕскер çинҫен калаçасшăн тата аҫи?—Мĕн калаçассу пур вара санăн? Çамрăк есĕ, мĕн пĕленха... Санăн— кĕнеке те йĕлтĕр, ман пуçра пин шухăш.

Çак сăмахсене илтсессĕн нимĕн калама аптрарĕ Тимĕркке. Йепле нимĕн те пĕлмест пулаĭ? Паллах ĕнтĕ амăшĕ унтан нумай пурăннă тĕнҫере, нумай курнă, тĕрĕс. Анҫах хут пĕлменнипе, ĕлĕк пин çул, вунă пин çул кайалла мĕн пулнине, пĕлместех вăл. Тимĕркке пĕлет, Тимĕркке вуланă...—Ну кала еппин, мĕн калас тетĕн, итлетĕп,—терĕ ун патнелле пырса амăшĕ.—Ну? Çĕнĕ хыпар пурим?

Тимĕркке темĕскер каласшăн—каламасĭ, пысăк шухăш унăн çамрăк пуçне йăвăрлатнă.

Амăшĕ ăна аллисемпе кăтра пуçĕнҫен аҫашласа илҫĕ.

Пур йенҫен те аван есĕ, манăн аннем, санăн пĕр çитменлĕх çеç—хут пĕлместĕн.—терĕ.

— Ĕлĕк шкулсем сахал пулнă, мĕн тăвасха ăна? терĕ ăна хирĕç амăшĕ вăрăммăн .сывласа. Тепĕр йенҫен тата, мĕне кирлĕха мана хут пĕлни? Хут вĕренмесĕрех çак çут тĕнҫере хĕрĕхрен иртрĕм ĕнтĕ, вилиҫҫен пурăнăпха, хут пĕлмесĕрех. Çăкăр пĕçерме, кĕпе çĕлеме, пиравăр тĕртме пултаратăп, тата мĕн кирлĕ. Пур те хут пĕлсен, пĕлменни кам пулĕ?

Ҫăнах та çав, çав сăмахсене тавăрса калама

çăмăл мар. Хут вĕренме ђĕнсен, ваттисем çавна çеç переççĕ вара: „Хут вĕренмесĕрех пурăннă...“

Нимĕн калама аптăрат Тимĕркке çак сăмахсене хирĕç. Ђĕрере тулнă, темĕн те калĕђђĕ—сăмах çук, пуç çамрăкха, тĕплĕрех çавăрса илеймест.

Ўссе çитĕннĕ çын пулсан, амăшне вăл çак сăмахсене хирĕç акă мĕнле ответ парĕђђĕ: „Итлеха, йуратнă аннем, сана каласа кăтартам. Есĕ калатăн, хут вĕренмесĕрех епĕ пиравăр тĕртме, йашкаçăкăр пĕçерме, т. ыт. те пĕлетĕп тетĕн. Тĕрĕс. Килти ĕçсене, пўртри ĕçсене пĕлетĕн. Анђах вĕсене пĕлнипе çеç пурăнма хĕн. Паранкăран та темиçе тĕрлĕ апат пĕçерме пулаť те, кĕпе-йĕме те авантарах çĕлеме пулаť... пирĕн çире йепле кирлĕ апла çĕлекеленĕ кĕпе-йĕм, ĕмĕрхи пек çĕленĕ сăхман, çулла, шăрăхра, урана пĕрене пек ђĕркетпĕр, урасем пиçсе кайаççĕ. Хамăр хут пĕлмен пиркийех, епĕр мĕнђул сийен куратпăр... Ађапăђа ђирлесен, тўрех тухтăр патне кайиђђен, нимĕн пĕлмен суккăр карђăксем ђĕнсе темĕн те пĕр ĕçтеретпĕр те, ађасене сийенлетпĕр çеç, йе вĕлеретпĕр, йе ĕмĕрлĕхе çур çын туса хăваратпăр. Авă Хĕлип арăмĕ ађи Йеђук варпа ђирлесен, ним пĕлмен йумăç карђăк сăмахне итлесе, йешĕлсенкер ĕçтернĕ те, Йеђук,—унăн йуратнă ађи,—хăсса супсах вилсе кайнă. Тухтăр патне илсе кайнă пулсан, вăл сывах йулнă пулĕђђĕ, йе хăй хут пĕлнĕ пулсан кĕнеке вуласа пĕлнĕ пулĕђђĕ. Паллах ĕнтĕ, Хĕлип арăмĕ те, хăй ађине йуратса, ђирĕнђен сыватас тесе тăрăшнă, анђах тĕттĕмлĕх, хут пĕлменни хуплаңă

ăна. Йе тата Трашука илер—вăл мĕншĕн суккăр пулђĕ? Ăна та, куçне темĕн те пĕр кирлĕ-кирлĕ мар йарса суккăрлатрĕç. Шутласан вĕçне тухас çук! Илĕпĕр сикекен, куçакан ђирсене. Ађа ђирлесен çуллă йапала пама йурамасť, ăна „çăмăл апат" кирлĕ, сĕт, çырла шывĕ, пĕçернĕ панулми, есĕр ađăрсене йуратса, конешнă, вĕсем ђирлесен çуллă какай, йе çу çитеретĕр; вăл вара пĕтерсех лартаť. Ђирлĕ ађана мĕнле пăхмаллине, тата ђиртен мĕнле хăтăлмаллине ăста пĕлекен тухтăрсем кĕнеке çине çырнă, хут пĕлменнипе епĕр вулама пултараймасťпăр. Илĕпĕр варвитти ђирне... е-ей, пурне те ăçтан шутласа пĕтерен. Хут вĕренме кирлĕ! Ăслă, вĕреннĕ çынсем мĕн каланипе паллашма кирлĕ,—тейĕђђĕ Тимĕркке пысăк çын пулсан, анђах çапла çавăрса калаймарĕ вăл йуратнă амăшне. Çавах хăй шухăшне мĕн пултарнă таран каласа пађĕ вăл амăшне.

— Итлеха, акă траххом ђирĕ çинђен мĕн çыраť пĕр ăста вĕреннĕ тухтăр.

— Çапла пулĕ те-ха вăл, ывăлăм, ман ăçтан, йепле вĕренес вулама?

— Хам вĕрентеп, анне,—терĕ савăннă сасăпа Тимĕркке:—кашни кун, пушă вăхăтра, пĕрер сехет вĕренсен те, пĕр уйăх хушшинђе мар, пĕр-икĕ ернеренех вулама вĕренетĕн!

Амăшĕ шухăша кайрĕ.—Ђăнах та çав, тытăнса пăхнин сийенĕ пулмĕ, вĕренсен вĕренĕп, вĕренеймесен—пăрахăп,—шухăшлаť вăл ăшĕнђе.—Çамрăк ађасем вĕреннине--епĕ вĕренеймĕпи вара?

— Ђим-ха,—терĕ Тимĕркке, сумккинђен „Çут-

талла“ йатлă кĕнеке кăларса. Акă пăх, кунта куратни? Ана виçекен ђалăш пек, икĕ ђалăш патак та варринђен туртнă.

— Ну вара? кулкаласа ыйтат унтан амăшĕ.

— „Ну“ çав. Çакна ĕнтĕ „А“ саспалли тесе „А“ тесе вулаççĕ. Манмăна? „А“.

— Вара манăн, пĕр вĕçĕмрен „А-а“ тесе тăмаллаи?—ун çумнерех сиксе ыйтат амăшĕ.

Тимĕркке пирĕн савăннипе хĕрсе кайат.

— Мĕншĕн вĕçĕмрен „А“ тăсмалла,—тет вăл кĕнеке çине пăхса. Пирĕн пĕр саспалли çеç мар вĕт, ыттисемпе те паллашăпăр. Акă тата, икĕ тӳрĕ патак, варринђен туртнă пирĕн мунђа ђӳређи пек, ăна „Н“ теççĕ, çапла саспалли вăл. Вăт хайхи, иккĕшне пĕрле вуласан, „АН“ пулат, калăпăр кăмака çинђен ан, çуна çинђен ан сăмах пур вĕт, ун пек сăмах?—васкаса аллисене сулкаласа калаçат Тимĕркке, амăшĕ итленипе хĕпĕртесе.

— Йăвăр мар иккен, епĕ темле, пуçа çĕмĕрмелле йапала пулĕ тесе, ак тамаша!—тĕлĕнет амăшĕ.

Тимĕркке хăйĕннех:

— Ну, вăт, хайхи, икĕ саспалли пĕлтĕн ĕнтĕ, çав икĕ саспаллипех темиçе сăмах тума пулат, пăхха, кунталла: акă малтан „А“ пултăр, унтан „Н“ хуратпăр, „АН“ пулђĕ, хыçала тепĕр „А“ хурсан, çĕнĕ сăмах тухрĕ: „А-Н-А“, çапла вĕт. Пирĕн ана, сирĕн ана, йе тата пĕр „Н“ вырăнне, çуммăнах икĕ „Н“ лартсан „АННА“ пулат, хĕрарăм йађĕ. Пирĕн Анна инке пур вĕт-ха? Вăт çавăн йађĕ...

— А-а-й, тĕлĕнмелле! Миçе саспалли мĕн пурĕ?

— Пирĕн, ҫăвашсен, вырăссеннинҫен кайарах, вырăссен—32, пирĕн 27 ҫеҫ. Кашни кун пĕрне вĕренсен те уйăхра пĕтеретпĕр. Ҫапла вĕт?—савăнса пăхаť вăл амăшĕ пуҫĕнҫен. Аттене хутпа кăранташ илтерĕпĕр, ҫырма та вĕрентĕп. Пĕртте йăвăр мар,—васкаť Тимĕркке килсе тăскăлнă сăмахсене каласа парас шухăшпа.

— Капла пулсан вĕренеп,—терĕ амăшĕ Тимĕрккене пуҫĕнҫен савса. Вĕренеп, йăвăр мар...

...Тимĕркке амăшĕ, тăрăшсан вуламл кăна мар—ҫырма та вĕренет!

Хакĕ 20 пус.

С. Ялавин. ПОЧЕТНЫЙ КОСТЯ

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары ★ 1931 г.